# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ТУРИЗМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Туризм çинчен" 1997 çулхи юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1997, 21 №; 2001, 40 №; 2004, 61 №; 2007, 73 №; 2008, 76, 77 №-сем; 2009, 80 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 12 №; 2016, 6, 12 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ; 2024, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6 статьян пĕрремĕш пайĕн тăххăрмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"туризм индустрийĕн сферинчи регионти патшалăх тĕрĕслевĕ (надзорĕ) çинчен калакан положение çирĕплетесси;";

2) 7.1 статьяра:

а) ятĕнче "хăна çурчĕсене" сăмахсене "вырнаçтару хатĕрĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

ă) пĕрремĕш пайра "хăна çурчĕсене" сăмахсене "вырнаçтару хатĕрĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

б) иккĕмĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3) II.1 сыпăка çакăн пек çырса хурас:

## "II.1 СЫПĂК. ТУРИЗМ ИНДУСТРИЙЁН СФЕРИНЧИ РЕГИОНТИ ПАТШАЛĂХ ТЕРЁСЛЕВЕ (НАДЗОРЕ)

### 11.1 статья. Туризм индустрийён сферинчи регионти патшалăх терёслеве (надзоре)

1. Туризм индустрийён сферинчи (экскурсовод (гид) тата гид-куçаруçă пулăшу ёçёсем туса панă, проводник-инструктор уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийёсенче пулăшу ёçёсем туса панă тёслёхсемсёр пуçне) регионти патшалăх терёслевне (надзорне) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё полномочи панă Чăваш Республикин ёç тăвакан органё туса пырать.

Экскурсовод (гид) тата гид-куçаруçă пулăшу ёçёсем туса панă, проводник-инструктор регион пёлтерёшлё уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийёсенче пулăшу ёçёсем туса панă чухне экскурсоводсен (гидсен), гид-куçаруçăсен тата проводник-инструкторсен туристсене (экскурсантсене) ертсе çӳренё чухне тивёçлё аттестаци пурри енёпе, ятарласа пёрле ертсе çӳремелли туризм маршручёсемпе çӳренё (иртсе çӳренё) чухне проводник-инструктор туристсене (экскурсантсене) ертсе çӳрес енёпе Федерацин "Раççей Федерацийёнчи турист ёç-хёлён никёсёсем çинчен" саккунёпе тата унпа килёшӳллён йышăнакан нормативлă право акчёсемпе пăхса хăварнă, экскурсоводсен (гидсен), гид-куçаруçăсен тата проводник-инструкторсен ёçё-хёлё тёлёшпе лартнă требованисене пăхăннине хак парассине уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийёсене сыхлас тата вёсемпе усă курас ёçри регионти патшалăх терёслевён (надзорён) шайёнче тăваççё.

2. Юридически сăпатсем, уйрăм предпринимательсем, физически сăпатсем Федерацин "Раççей Федерацийёнчи турист ёç-хёлён никёсёсем çинчен" саккунёпе тата унпа килёшӳллён йышăнакан нормативлă право акчёсемпе пăхса хăварнă тата Федерацин "Раççей Федерацийёнчи турист ёç-хёлён никёсёсем çинчен" саккунён 19[5] статйин виççёмёш–улттăмёш пайёсенче кăтартнă çирёп йёркепе пурнăçламалли требованисене пăхăнасси туризм индустрийён сферинчи регионти патшалăх терёслевён (надзорён) ыйтăвё пулса тăрать.

3. Туризм индустрийён сферинчи регионти патшалăх терёслевне (надзорне) йёркелес тата пурнăçлас ёçе Федерацин "Раççей Федерацийёнчи пат-

шалăх тĕрĕслевĕ (надзорĕ) тата муниципаллă тĕрĕслев çинчен" 2020 çулхи утă уйăхĕн 31-мĕшĕнчи 248-ФЗ №-лĕ саккунĕпе йĕркелесе тăраççĕ.

Туризм индустрийĕн сферинчи регионти патшалăх тĕрĕслевĕ (надзорĕ) çинчен калакан положение Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çирĕплетет.".

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
27 №